**Технологи картти (тĕслĕх)**

***«Пирĕн шкул» раздел***
**Урок теми «Тăхтавра»**

**Урок тĕсĕ:** çĕнĕ пĕлӳ илмелли хутăш урок.

**Урок тĕллевĕ:** *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсем япалана пĕлтерекен сăмахсем хыççăн тăнине ăнлантарасси, *ăçта? (хăш вырăнта?)* ыйту çине ыйтăннине кăтартасси; *парта айĕнче, парта хушшинче, парта çинче, парта патĕнче* йышши сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсемпе паллаштарасси; çĕнĕ сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем:**

**Харкамлăх (личностные) результачĕсем -** калаçас, ыттисене тăнласа итлес пултарулăх аталанни; тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни; сывлăхшăн тĕрĕс канмалли çинчен пĕлни; татах та нумайрах пĕлес туйăм çурални, аталанни; çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни.

**Пĕлӳлĕх (познавательные) результачĕсем** - *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* хыç сăмахсем япалана пĕлтерекен сăмахсем хыççăн тăнине ăнланни, *ăçта? (хăш вырăнта?)* ыйту çине ыйтăннине ăнланни; *парта айĕнче, парта хушшинче, парта çинче, парта патĕнче* йышши сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене ăша хывни; çĕнĕ сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхни.

**Хутшăну (коммуникативные) результачĕсем** – вĕрентекен информацине ăнланса кĕске хуравсем пама хăнăхни, „Тăхтавра“ тема тăрăх çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама хăнăхни; *ăçта?* ыйтăва тĕрĕс хуравлама хăнăхни; калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă, ăнланмалла каласа пама тăрăшни; чăвашла çыхăнуллă пуплеве аталантарни; шухăшлав мелĕсемпе усă курма пĕлни; ыттисене ăнланмалла кĕскен каласа тата ыйтусем пама пултарни; учитель, юлташĕсем каланине итлеме пултарни; калаçнă-хутшăннă чухне пĕр-пĕрне хисеплени.

**Йĕркелӳ (регулятивные) результачĕсем -** хăйĕн ĕçне сăнаса-асăрхаса пыма пултарайни; хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни; кашни çыннăн хăйĕн умне яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни; ĕçе мĕншĕн, мĕнле тĕллевпе тунине ăнланни; япала, ӳкерчĕк тăрăх мĕнле йĕркепе каламаллине пĕлни; сăмахсене хусканусем туса палăртнине ăнланасси; вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курма вĕренни.

**Технологисем:** вăйă мелĕпе, ушкăнпа вĕренни, ӳкерчĕксем тăрăх текст йĕркелесси, «критикăллă» шухăшлава аталантарасси, сывлăха упрасси, информаципе хутшăну, сывлăха упракан, харпăрлăха аталантаракан, ушкăнра хутшăнса ĕçлеме хăнăхтаракан технологисем.

**Ĕç мелĕсемпе меслечĕсем:** ыйту-хурав, учитель сăмахĕ, калаçу, шырав-тĕпчев, çурма сасăпа, саспа вуласси, вăйă меслечĕ, рефлекси мелĕ, проблемăллă ыйтăва тăратни, илемлĕ вулав, мăшăрсенче, ушкăнсенче ĕçлесси, диалог, монолог тăвасси, словарь ĕçĕ, тема тăрăх калаçу ирттересси; ыйтусем çине хурав тупма вĕренесси; шыравпа танлаштару.

**Пуплев хăнăхăвĕсем:** сăмах йышне пуянлатни, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса çыхăнуллă текст йĕркелени, текстпа тĕрĕс ĕçлеме, сăмахсене ушкăнлама хăнăхни, пĕр-пĕрне ыйтусем парсахуравлас хăнăхусене аталантарни.

**Ĕç хатĕрĕсем:** компьютер, проектор, интерактивлă доска, вĕренӳ кĕнеки, смайликсем.

# Урок юхăмĕ

| Урок юхăмĕ | Мелпе меслетсем | Вĕрентекен ĕçĕ | Ачасен ĕçĕ | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | пĕлÿлĕх результачĕсем | | хутшăну результачĕсем | | йĕркелÿ результачĕсем | |
| | | | *пурнăçлакан ĕçсем* | *ĕçе йĕркелемелли майсем* | *пурнăçлакан ĕçсем* | *ĕçе йĕркелемелли майсем* | *пурнăçлакан ĕçсем* | *ĕçе йĕркелемелли майсем* |
| **Йĕркелÿ саманчĕ (класа йĕркелени)** | **Сывлăх сунма вĕрентни, урокра чăвашла калаçма çăмăлрах пултăр тесе фонетика зарядки туса ирттерни** | Урока йĕркелесе ярать, класра туслă ĕçлессине йĕркелет. | Чăвашла сывлăх сунаççĕ. | Кашни учителĕн хăйĕн майĕ, вăрттăнлăхĕ пур | Ачасем вĕрентекене чăвашла сывлăх сунаççĕ, сăвă каласа пĕр-пĕрне саламлаççĕ (е урăх майпа) | Пĕр-пĕрин çине кулса пăхса илни | Чăвашла сăмахсене калаççĕ | Фонетика зарядкине хапăлласах туни |
| | **Пуплеве хăнăхтарни (çанталăка сăнлани)** | Малтан çанталăка сăнласа пама ыйтни, ун хыççăн экран çинчи ÿкерчĕксем тăрăх калаçу йĕркелени– *Халь хĕлле-и? Çуркунне-и?* *– Паян урамра ăшă-и? Сивĕ-и?* *– Урамра хĕвел пăхать-и? Пăхмасть-и?* *– Урамра çумăр çăвать-и? Çумасть-и?* *– Урамра юр çăвать-и? Çумасть-и?* *– Çил вĕрет-и? Вĕрмест-и?* | Паянхи çанталăка сăнлаççĕ, çанталăк паллисемпе пулăмĕсем çинчен мĕн пĕлнине черетпе каласа параççĕ | Çут çанталăка сăнама, ун илемĕпе киленме пĕлни | Экран çинчи ÿкерчĕксем тăрăх ачасем черетпе калаççĕ | Иккĕн (пĕр-пĕрне итлеме, илтме вĕренсе) калаçу йĕркелеме пултарни | Калаçăва хутшăнаççĕ, çыхăнуллă, итлекенсем ăнланмалла каласа пама вĕренеççĕ | Сăнанине ушкăнпа пĕтĕмлетÿ туни |
| | **Сасă хусканăвĕ: (вĕрентекен калать, ачасем** | - Эпĕ шыратăп, эсĕ шыратăн, вăл шырать. | - Эпĕ шыратăп, эсĕ шыратăн, вăл шырать. | Сасăсене, сăмахсене тĕрĕс калама | Пурте урокра ĕçлеме хатĕр пулаççĕ | Пĕр-пĕринпе ăнланса | Калаçу йĕркелени | Пĕтĕмлетÿ туни |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | **хыççăн каласа пыраççĕ)** | - Эпĕ хăратăп, эсĕ хăратăн, вăл хăрать.<br>- Эпĕ ӳсетĕп, эсĕ ӳсетĕн, вăл ӳсет.<br>- Эпĕ выртатăп, эсĕ выртатăн, вăл выртать.<br>- Эпĕ калатăп, эсĕ калатăн, вăл калать. | - Эпĕ хăратăп, эсĕ хăратăн, вăл хăрать.<br>- Эпĕ ӳсетĕп, эсĕ ӳсетĕн, вăл ӳсет.<br>- Эпĕ выртатăп, эсĕ выртатăн, вăл выртать.<br>- Эпĕ калатăп, эсĕ калатăн, вăл калать. | хăнăхни | | ĕçлени | | |
| **Малтан вĕреннине аса илни** | **Малтанхи уроксенче вĕреннине аса илни.**<br>**Аса илмелли тема: ĕçе пĕлтерекен мĕн тума? ыйтури сăмахсем çумне – ма(-ме) аффикссем йышăнаççĕ: тухма, илме.** | 1. Шут хисепĕсене аса илнине йĕркелет.<br>2. 100 таран шутлама хăнăхтарать. | Ачасем 100 таран шутласа параççĕ, шут хисепĕсен аса илеççĕ | Хуравлас хăнăхусене аталантарни. Хуравлани. | Пĕри ыйтни, тепри хуравлани | Пĕрин хыççăн тепри ĕçлени | Ачасем йĕркипе сăмах хушса пырса предложенисем йĕркелеççĕ | |
| | | Хуравлас хăнăхусене аталантарать: Эсĕ мĕн тума пĕлетĕн? | Ачасем ыйту çине хуравлаççĕ:<br>- Эпĕ шутлама пĕлетĕп.<br>- Эпĕ пианино калама пĕлетĕп.<br>- Эпĕ чăвашла калаçма пĕлетĕп.<br>- Эпĕ çĕр таран шутлама пĕлетĕп. | Ыйтусем çине хуравлама вĕренни | Вĕрентекен информацине ăнланса кĕске хуравсем параççĕ. | Пĕр-пĕринпе ăнланса ĕçлени | Калаçăва ăнланмалла хутшăнаççĕ, каласа параççĕ<br><br>Предложенисе не калаççĕ, ăнланнине хусканусем туса палăртаççĕ | Урок проблемине палăртма пĕлни. |
| **Вĕренӳ проблемине палăртни** | **Урок темине, проблемине палăртни.**<br><br>Паян урокра *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсемпе ĕçлетпĕр. Урок теми „Тăхтавра“. Тăхтав вăхăтĕнчи самантсене аса | Урок темин пĕлтерĕшне, проблемине хускатать.<br>- Эпĕ сире тупмалли юмах (вĕрентекен шăппăн калать: «загадка», кайран татах чăвашла калать «тупмалли | Ачасем вĕрентекене тимлĕ итлесе лараççĕ, хуравне параççĕ:<br>*-Шăши.*<br>Ачасем кĕнекери ӳкерчĕксемпе ĕçлеççĕ:<br>*- Шăши парта айĕнче.* | Ăнланма, калаçура хутшăнма вĕренни.<br>*Айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсемпе предложенисем йĕркелеме ханăхни. | Ыйтусем çине хуравлаççĕ, вĕрентекене ăнланнине кăтартаççĕ. | Предложенисене хусканусем хыççăн ăнкарма тăрăшни.<br>Ыйту çине хуравлама вĕренни. | Чăваш чĕлхинче *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсем япалана пĕлтерекен сăмахсем хыççăн тăнине ăнланаççĕ,<br>*ăçта? хăш* | *Айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсемпе предложенисем йĕркелеме хăнăхни, ыйтусем çине тĕрĕс хурав пама ăнтăлни. |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | илни. | юмах») каласа паратăп.<br>- Вăл пĕчĕк чĕрчун, вăл сăрă тĕслĕ, вăл кушакран хăрать, вăл сыр юратать, мĕн вăл?<br>- Шăши ăçта? Çĕнĕ сăмахсемпе калаçура паллаштарать Предложенисе не хусканусем туса каланине ăнланма хăнăхтарать. Çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарать. | *- Шăши парта хушшинче.*<br>*- Шăши парта çинче.*<br>*-Шăши парта патĕнче.* | | | | *вырăнта?* ыйтусем çине хуравлама ханăхаççĕ. | |
| **Çĕнĕ темăпа ĕçлени** | **Кĕнекери темăпа ĕçлени. Тăтăш усă курмалли сăмахсене пуплеве кĕртни. 1. Кĕнекери ÿкерчĕкпе ĕçлени. Кĕнеке уçни. Ачасене пуплевĕшсем вулаттарни.** | Кĕнекери ÿкерчĕксемпе ĕçлеттерет, рольсем валеççе парса вулаттарать..<br>- Камăн килте шăши пур?<br>-Асаматăн вара шăши пур! Вăл ăна шкула илсе килнĕ. Шкулта мĕн пулнă? Атьăр вулатпăр! Ыйтусем çине хуравлатпăр!<br>-Кунта камсем?<br><br>- Вĕсем ăçта?<br>-Кунта миçе ача? | Ачасем кĕнекисене уçса 2-мĕш хăнăхтарăва тупаççĕ, рольпе вулаççĕ.<br>- Манăн килте шăши çук<br><br>Ачасем ыйтусем çине хуравлаççĕ:<br><br>-Ÿкерчĕкре ачасем.<br>- Вĕсем тăхтавра.<br>-Виççĕ. | Вулав хăнăхăвне аталантарни, вĕрентекен ыйтăвĕсем çине хурав пама пултарни. | Калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă тума пĕлни, итлекенсене ăнланмалла каласа пама тăрăшни. | Вăл ку ĕçе пурнăçлама пĕлÿсем кирлине «курма» вĕренни. | Пĕр-пĕрне тимлĕ итлеççĕ, вĕсен шухăшĕсемпе килĕшнине палăртаççĕ, килĕшмесен пулăшма хатĕр пулнине кăтартаççĕ. | Ĕçе пурнăçлама тытăниччен ачасем хăйсен пĕлĕвĕн шайне палăртма, пĕлекен сăмахсене шута илме вĕренни |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | -Кунта миçе арçын ача?<br>-Миçе хĕр ача?<br>-Пĕрремĕш арçын ача мĕн калать?<br>-Атнер мĕн хуравлать?<br>-Пĕрремĕш ача тĕлĕнет. Вăл мĕн калать?<br>-Асамат мĕн калать?<br>-Ирина хăрать. Вăл мĕн калать?<br>-Асамат хăрамасть. Вăл мĕн калать? | -Иккĕ.<br><br>-Пĕрре.<br>-Эсĕ мĕн шыратăн?<br><br>-Шăши<br><br>-Чăнах-и<br><br><br>-Ăçта?<br><br>-А-а-а! парта айĕнче шăши чупать!<br>-Вăл çыртмасть. | | | | | |
| **Кану саманчĕ** | **«Эсĕ никама та ан кала» пуплевĕше çирĕплетни.** | Вĕрентекен пĕр ачана доска патне чĕнсе хăлхаран шăши (тетте е ӳкерчĕк) ăçта пытаннине питĕ шăппăн пĕлтерет.<br>- Ачасем, шăши ăçта? Кам пĕлет?<br>- Эпĕ вара пĕлетĕп. (Коля), кил ман пата!<br>Ача килет те. Вĕрентекен хăлхаран шăппăн калать,<br><br>- Шăши (шкап хыçĕнче) | Ачасем вăйă выляççĕ, вĕрентекене тимлĕн итлеççĕ, ĕç хушнине пурнăçлаççĕ.<br><br><br><br><br>- Эпĕ пĕлместĕп | Тĕрле хусканусем туни, ачасен тавракурăмне аталантарни | Пĕри ыйтать, тепри хуравлать | Вăйă урлă калаçăва аталантарни | Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ.<br>Пĕрин хыççăн тепри ĕçлет. | Хушнă ĕçе пурнăçлани |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Кайран ачасене илтмелле: «Эсĕ никама та ан кала!» - тет:<br>4-5 ачана чĕнсе каламалла, кайран вĕрентекен ыйтать:<br>- Шăши ăçта?<br>АААА: Шкап хыçĕнче.<br>- Шыратпăр! | - Юрать.<br><br>Ача(сем) шкап хыçĕнчен тупнă шăшие кăларса кăтартаççĕ. | | | | | |
| | **Кĕнекери 3-мĕш хăнăхтарăва пурнăçлани, «Хуравла» ĕçе пурнăçлани**<br><br>**а) «çинче», «айĕнче», «патĕнче», «умĕнче», сăмахсене пуплеве кĕртни.** | Ӳкерчĕкпе паллаштарать, геройсен репликисене ăнлантарать, рольсем тăрăх вуласа хуравсем парас ĕçе йĕркелет. Рольсем уйăрать: Ирина, Атнер, Алина, Асамат.<br><br>- Ачасем, сĕтел çинче мĕн-мĕн пур?<br><br>- Ачасем, сĕтел айĕнче мĕн пур?<br>- Ачасем, сĕтел патĕнче (около - сĕтел патĕнче) мĕн пур?<br>- (Ӳкерчĕкри) ручка (тетрадь, кĕнеке) ăçта?<br>- (Ӳкерчĕкри) | Ӳкерчĕке тимлĕ пăхаççĕ, вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.<br><br>- Сĕтел çинче ручка, тетрадь, кĕнекесем, кăранташ пур<br>- Сĕтел айĕнче пушмак, сăрăсем пур.<br>- Сĕтел патĕнче мечĕк, портфель пур<br><br>- Сĕтел çинче | Ыйтусем çине хурав тупма вĕренни. | Уйăрнă рольсемпе выляни. Мăшăрпа ĕçлеме хăнăхни | Чăваш чĕлхине илтме, юратма вĕренни. Мăшăрпа туслă, ăнланса ĕçлеме вĕренни. | Ӳкерчĕкри тĕслĕхĕпе усă курса предложенисем тума хăнăхаççĕ. | Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курма вĕренни. |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | портфель ăçта?<br>- (Ӳкерчĕкри) пушмак ăçта?<br>- (Ӳкерчĕкри) мечĕк ăçта? | - Сĕтел патĕнче<br><br>- Сĕтел айĕнче<br><br>- Сĕтел умĕнче | | | | | |
| | **5. *«Ăçта»* вăйă выляни**<br><br>**&Ку вайă – хушса панă материал (вăхăт çитсен)** | Малтан хĕр ачасене, кайран арçын ачасене доска умне кăларать. Вĕсене ĕçсем хушать: *сĕтел çинче, парта айĕнче, сĕтел хушшинче, пукан патĕнче, доска патĕнче.* | Доска умне тухнă ачасем вĕрентекен хушнине тăваççĕ. Ыттисем – «*тĕрĕс, тĕрĕс мар»* тесе вăййа хутшăнаççĕ. | *«Ăçта»* вăййăпа паллашни | Пĕри ыйтать, тепри хуравлать | Вăйă урлă калаçăва аталантарни | Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ.<br>Пĕрин хыççăн тепри ĕçлет. | Хушнă ĕçе пурнăçлани |
| | **7. Кĕнекери 4-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени. «Кирле сăмах çыр: айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче» ĕçе пурнăçлани** | Предложенисе не вулаттарать. Ӳкерчĕксем тăрăх предложенисен пĕлтерĕшне ăнланма пулăшать, *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсемпе усă курса тĕрĕс çырассине ăнлантарать. | **В**ĕрентекенпе пĕрле вулаççĕ. Ӳкерчĕкпе килĕшуллĕн предложенисене тупса палăртаççĕ, *айĕнче, хушшинче, çинче, патĕнче* сăмахсемпе усă курса тĕрĕс предложенисем йĕркелесе тетрдаь çине çыраççĕ.<br>*Сĕтел хушшинче вĕрентекен ларать.*<br>*Пукан патĕнче кушак ларать.*<br>*Шкап айĕнче шăши ларать.*<br>*Çӳлĕк çинче чечек ларать*. | Ачасем вĕрентекенĕн *ăçта?* ыйтăвĕ çине хуравлани, предложенисем йĕркелени. | Парта хушшинче мăшăрпа вулаççĕ. | Пĕр-пĕрне тимлĕ итлеме хăнăхни, вĕсен шухăшĕсем пе килĕшнине палăртма, килĕшмесен пулăшма хатĕр пулни | Тимлĕн итлеме, калаçăва хутшăнма пĕлни | Иккĕн (пĕр-пĕрне итлеме, илтме вĕренсе) тĕслĕхсене пăхăнса калаçу йĕркелеме пултарни |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Хускану саманчĕ** | **Ĕçе пĕлтерекен сăмахсене хусканусем туса кăтартни урлă ачасен сывлăхне упрасси** | Сăмахсене хусканусем туса кăтартать<br>*Ирхине ирех тăратăн*<br>*Эпĕ хускану тăватăн*<br>*Çăвăнатăн, шăлăнатăн*<br>*Чей ĕçетĕн, тумланатăн*<br>*Васкаса шкула чупатăн* | Ачасем хусканусем тăваççĕ, сăвва вĕрентекенпе пĕрле калаççĕ.<br>*Ирхине ирех тăратăн*<br>*Эпĕ хускану тăватăн*<br>*Çăвăнатăн, шăлăнатăн*<br>*Чей ĕçетĕн, тумланатăн*<br>*Васкаса шкула чупатăн* | Ачасем хусканусем тăрăх сăмахсене ăнланни, аса илсе юлни | Вĕрентекенпе калаçăва хутшăнаççĕ. | Тимлĕн итлеме, калаçăва хутшăнма пĕлни | Доска умне хĕр ачасене тата арçын ачасене уйрăм кăларса ĕçлеттерни | Вĕрентекен каланине итлеме пĕлни, хусканусне сăнама пĕлни |
| **Рефлекси** | **Урока пĕтĕмлетни, ачасене çĕнĕ пĕлӳсемпе хавхалантарни** | Вĕрентекен доска çине висĕ смайлик çыпăçтарать: 😊 ☹️ 😐.<br>*Вĕрентекен*. Мана урок килĕшрĕ. (1-мĕш смайлик айне «+» паллă ӳкерет.) Кама урок килĕшрĕ? Тăрăр. (Ачасем тăраççĕ).<br>Кашни смайлик пĕлтерĕшне ăнлантарать. | Урокра мĕнле кăмăлпа ĕçленине, хăй ĕçĕпе кăмăлллă пулнине палăртаççĕ. | Урокра мĕнле ĕçленине кура ачасем хăйсен ĕçне хаклама пĕлни. | Йышăннă модельсемпе ĕçлеççĕ. | Йышăннă модельсемпе усă курса шухăша кĕскен палăртма пĕлни | Ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ. | Кашни çыннăн хăйĕн умне яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни, хăйсен ĕçне хаклама пĕлни. |
| **Урока вĕçлени** | Сыв пуллашни | Ачасене сыв пуллашма вĕрентет, тепре курма хавас пулнине кăтартать. | Этикет сăмахĕсене аса илеççĕ. | Этикета пĕлни | Ачасем сыв пуллашаççĕ. | Чăвашла этикет сăмахĕсене пĕлни, этикета пăхăнни | Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ. | Вĕрентекен тĕслĕхлĕ каланине итлеме пĕлни |